**Хĕсĕкрех иккен**

Хĕсĕкрех иккен

Халь тăван кил-çурт.

Илĕртет ĕлккен

Инçетри мăн çул.

Пĕлес çук ăна,

Умăнти кунна:

Те телей сунать,

Те инкек кăна.

Этеме темме

Пӳрнĕ хур курма.

Кирлĕ мар йĕме,

Хурланма-тума.

Ватăлни каять,

Çамрăкки килет.

Çак шăпа-пая

Кашниех кĕрет.

Хĕн тивсен те, тем

Илĕртет инçет.

Пурпĕрех этем
Ыррине кĕтет.

Çавăнпах-и, тен,
Чĕтремест алли.
Çавăнпа этем
Пуринчен вăйли.

Савăнса-кулса
Эпир ӳсрĕмĕр.
Ырлăхне курса,
Хурлăх тӳсрĕмĕр.

Кĕреçе çĕре
Касса кĕчĕ пуль.
Çывхарать черет...
Тăкăнать куççуль...

*Смолин, А. «Хĕсĕкрех иккен...» : [сăвă] / А. Смолин // Тăван Атăл. – 2010. – № 9. – С. 78-79.*